84-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
29
ЭРНЕКУН
203 (5918) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Мобилизациленисен çемьисемшĕн тăрăшасси — пĕтĕм халăх ĕçĕ

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн боецĕсемпе командирĕсем отечественнăй вăрçăн франчĕсенче малтанхи кунсенчен тытăнсах хăюллăн та паттăрăн, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçрĕç. Тăшманăн вăрă-хурахла çарне совет войскисем отпор парасси кашни кунах ӳсет, тăшманăн вăйĕ чакса пырать.

Совет çĕршывĕнчи нумай миллионлă пĕтĕм халăх хăйĕн Хĕрлĕ Çарне, хăйĕн Хĕрлĕ Флотне пулăшса тăрать, вăл пулăшу пур енĕпе те сарăлса пыратъ. Фабрик-заводсенче рабочисем икшер норма тултарăçрĕ, колхозлă уйхирсенче колхозниксем пĕтĕм вăй-хала хурса кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ, ваттисем те çамрăккисем — пурте фронта валли ĕçлеççĕ. Халăх хăйĕн нумай миллионлă оборона фондне туса хучĕ.

Ирĕр фашизма хирĕç вăйлă çапăçăва тухнă Хĕрлĕ Çар боецĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе чысне хӳтлет, фашизм пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ халăхсене ирĕклĕх кӳрет.

Урнă ыйтă Гитлер вăрçа хăваласа кĕртнĕ нимĕç салтакĕн ĕмĕчĕпе шанчăкĕ çук. Унăн килĕнче вăрçăпа антраса çитнĕ çемьи юлнă. Германи çарĕн тылĕнче положени начарланса çитнине çапăçу хирĕнче тупнă документсем тата тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсен сырăвĕсем лайăх кăлартса параççĕ. Нимĕç салтакĕсем хăйсен тăванĕсем патне хăйсен асаплă, выçăллă-тутăллă пурнăçĕ çинчен çыраççĕ.

Пирĕн совет воинĕсен арăмĕсемпе ачисен çырăвне вуласан, кашни сынăн чĕри савăнать, вăл çырусенче арăмĕ хăйĕн упăшки патне, ачисем ашшĕ патне тылра пыракан хĕрӳллĕ ĕçсем, предприяти, колхоз тунă çĕнĕ ситĕнӳсем, вĕсен çемьисене пур енĕпе те пулăшни çинчен пĕлтереççĕ. Совет хĕрарăмĕ хăйĕн упăшкине фронта пысăк хаваспа ăсатать, мĕншĕн тесен вăл унăн çемьишĕн совет правительстви тăрăшнине, пулăшнине лайăх шанса тăрать.

Социализмлă государство, пирĕн пĕтĕм халăх хăйĕн герой-воинĕсемшĕн, вĕсен арăмĕсемшĕн, ачисемшĕн, амăшĕсемшĕн куллен тăрăшать.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указ тăрăх, рядовой тата çĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен çемьисене вăрçă вăхăтĕнче пособисем парса тăраççĕ. Пособисем пама правительство укçа-тенкĕ нумай уйăрать. Мобилизациленисен çемьи тивĕçлĕ пулăшу илет. Военнослужащисен çемьисене хваттерсем çирĕплетсе панă тата хваттер укçи тӳленĕ чухне вĕсене льготăсем параççĕ.

Пирĕн республикăра тăна мобилизациленисен нумай çемьине государство пособийĕсене памалла тунă. Вĕсен ыйтăвĕсене хăвăрт тата çивĕнчех пăхса тухаççĕ.

Шупашкар хулинче çĕршер çемье государствăран пособи илеççĕ. Савăнпа пĕрлех, тĕрлĕ организацисем красноармеецсен арăмĕсене çĕçе вырнаçтарма пулăшнă, хваттерсем тупса панă тата ачисене яслĕсемпе садсене вырнаçтарнă.

Çавăн пекех, мобилизациленисен çемьисене колхозсем те пысăк пулăшу параççĕ. Ямаш (Çĕрпӳ р.) ялсоветĕнчи «Союз» колхозри пулăшу касси красноармеецсен çемьисене 90 пăт тĕштырă парса пулăшнă. Туçинчи «Цивильстрой» колхоз членĕн А. Соловьевăн икĕ ывăлĕ фронтра. Çемьере ĕçлеме пултаракан çын çук. Соловьев юлташăн килçурчĕ çунса кайнă пулнă. Колхоз правленийĕ ăна кил-çурт лартма пулăшнă тата сельпо урлă кĕпе-тумтир илсе панă. Халĕ Соловьев юлташ государствăран кашни уйăхрах 100 тенкĕ пособи илсе тăрать. Кун пек примерсем, красноармеецсен çемьисемшĕн пĕтĕм халăх тăрăшнине кăтартакан примерсем нумай илсе кăтартма пулать. Çавăн пекех, республикăри чылай колхозсем красноармеецсен çемьисен ачисене яслĕсене вырнаçтарас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Пособисене вăхăтра парасси — государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Партипе совет организацийĕсен çак ĕçе хăйсен çине илсе, ăна тивĕçлипе организацилемелле. Военнослужащисен пособи илме тивĕç кашни çемьи вăхăтра тата закон хушнă чухлĕ пособи илме пултартăр.

Тăван çĕршывăн патриотисем нумайĕшĕ хăйсен фронта тухса кайнă упăшкисем, пиччĕшĕсем вырăнне ĕçлеме производствăна, машинно-тракторнăй станцисене пычĕç, вĕсем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Мобилизациленисен çемьисен членĕсене ĕçе вырнаçтарасси, кĕске сроклă курссем организацилесе массăллă квалификацисем илме пулăшасси — партипе совет организацийĕсен хисеплĕ ĕçĕ. Производствăна çĕнĕрен пынă хĕрарăмсене ĕç техникине вĕрентес çĕрте пур майсемпе те пулăшса пырас пулать.

Партипе правительство пирĕн ачасемшĕн яланах тăрăшнă, вĕсене хаваслăн пурăнма, вĕренме мĕн кирлине пĕтĕмпех туса панă. Халь, вĕсен ашшĕсем тăван çĕршывшăн çирĕп кăкăрпа тăрса çапăçнă вăхăтра, ачасемшĕн тăрăшассине темиçе хут ӳстермелле. Ĕçе кĕрес текен хĕрарăмсен ачисене яслĕсене, садсене вырнаçтарма пулăшмалла. Килхуçи хĕрарăмĕсем, шкулсенче аслă классенче вĕренекенсем пушă вăхăтсенче ачасен канăвне организацилемелле.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене мĕн кирлине пĕтĕмпех туса парса фронта пулăшса тăнипе пĕрлех, вĕсен çемьисемшĕн те куллен тăрăшăр. Предприятисенчи, колхозсенчи, учрежденисенчи партипе общественăллă организацисен хăйсем патĕнче ĕçленĕ, ăна мобилизациленĕ çынсен, тăван çĕршывăн хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçакансен çемьисемшĕн тăрăшассине, вĕсене пулăшса тăрассине пĕр минутăлăха та манăçа хăвармалла мар. Мухтавлă совет паттăрĕсен çемьисене пулăшса, хавхалантарса пырасси — пирĕнтен кашниех тума тивĕçлĕ хисеплĕ ĕç.

Социализм çĕршывĕн воинĕсем этемлĕхĕн чи тискер тăшманне — Германи фашизмне хирĕç вăйлăн тата хăюллăн çапăçаççĕ. Вĕсем хăйсен пурнăçне шеллемеççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсен ачисемшĕн, арăмĕсемшĕн, амăшĕсемшĕн, йăмăкĕсемшĕн партипе правительство, пĕтĕм халăх ăшшăн тăрăшнине вĕсем пĕлсе тăраççĕ.

Халăх хăйĕн Хĕрлĕ Çарне юратать. Савăнпа та вăл фашистла варвăрсене пĕтерсе тăкма мĕн кирлине Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот валли пĕтĕмпех туса парать.

Государствăна тырă тăратмалли тата натуроплата тӳлемелли çулталăк планне тултарнă

КОЛЬЦОВКА, августăн 27-мĕш. (**Телеграфпа**). Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă тăратмалли, натуроплата тӳлемелли çулталăк планне тултарчĕ. Кунсăр пуçне, тăван çĕршыв оборонин фондне 3600 пăт панă. Гитлерла бандăсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çара тырпул, аш-какай, пахча-çимĕçсем тата ытти япаласем парса пулăшăпăр.

Колхоз председателĕ
С. КОРОТКОВ.

Натуроплата тырри параççĕ

КАНАШ, августăн 28-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Заготзерно пунктне кашни кунах çĕнĕ тырă килсе тăрать. «Коминтерн» колхоз 1941 çулхи обязательство шучĕпе государствăна 101 центнер, Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз—339 центнер, çак шутран натуроплата шучĕпе 47 центнер тырă леçсе пачĕç. Колхозсем государствăна тырă пама тунă графика срокченех тултарса пыраççĕ.

Чылай колхозсем тырă панă вăхăтрах пахча-çимĕçсем леçсе парассине организацилеççĕ. Киров, Чкалов ячĕпе тăракан тата «Хĕрлĕ Çар», «Красноармеец» колхозсем государствăна хăяр парса татрĕç.

Т. МАЙОРОВ.

Колхозсенчен пĕлтереççĕ

ЕЛЧĔК. Аслă Шăхаль колхозĕн иккĕмĕш бригади тырпула пухса кĕртес ĕçре кăтартуллăн ĕçлет. Ку бригада августăн 23-мĕш тĕлне пăри тата çурăн тулă вырса пĕтернĕ. Çак бригадăра ĕçлекен К. Арлановăпа В. Волков юлташсем кунне 700-шер кĕлте сыхаççĕ.

В. ЕРТМАКОВ.

ШАХАСАН. Çĕнĕ Пикер колхозĕнчи А. Викторовпа А. Софронов колхозниксем кунĕпех çĕмел тăваççĕ. Планпа пахнă тăрăх, кунне 25 çĕмел тумалла пулсан, вĕсем 38—40 çĕмел таран тăваççĕ.

Н. ГРАЧЕВ.

КАНАШ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз августăн 22-мĕшĕнче кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ. Пĕрремĕш бригада кĕрхи тырăсене вырма 3—4-мĕш бригадăсене пулăшнă. Ку бригадăра ĕçлекен колхозниксем каçхине киле тавăрăнман, уйрах выртнă. Бригадăсенче агитаципе массăллă ĕçе куллен туса пыраççĕ. Колхоз çĕршыв оборонин фончĕ валли 58 килограмм аш-какай, 12 килограмм ытларах пыл пачĕ.

Т. ТУРХАН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Кингисепп, Смоленск, Гомель, Днепропетровск тата Одесса енĕсенче противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Августăн 26-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 17 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Днепрăн сылтăм енчи çыранĕнче Р. местечки патĕнчи хĕрӳллĕ çапăçусенче подполковник Чигринăн часĕ нимĕçсен 132-мĕш пехотнăй дивизине йывăр поражени кӳнĕ. Темиçе çулпа пырса, фашистсем маршран тӳрех пирĕн оборона линине атакăлама хăтланнă. Лейтенант Горбачев ертсе пыракан боевой охранени, вырăнпа тата хĕçпăшалсемпе пĕлсе усă курса, противника оборонăн малти линийĕ патне çитиччен хавшатса, вăйсăрлатса çитернĕ. Зенитнăй пулеметсен ротин командирĕ кĕçĕн лейтенант Шкляренко, пысăк калибрлă установкăран персе, тăшман батальонне пĕтерсе тăкнă, çав батальон атака тума хатĕрленнĕ пулнă. Тăшманăн тепĕр батальонĕ, çапах та, местечко варрине хĕсĕнсе кĕме пултарнă. Урамсенче хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Тăшман çине красноармеецсем çуртсен чӳречисенчен, крышăсемпе чердаксем çинчен, подвалсенчен тата баррикадăсем хыçĕнчен персе тăнă. Местечко урамĕсенче вилнĕ тата аманнă нимĕçсем çĕршĕрех йăваланса выртнă. Подкреплени килессе кĕтсе, нимĕçсем хаялла чакнă. Подкреплени килсен, противник артиллерирен тата авиацирен персе хатĕрленнĕ хыçăн, пĕрремĕш эшелонри темиçе батальона наступление кĕртсе янă. Çырмасем тăрăх пырса, тăшман высотасене çавăрса илме хăтланнă. Подполковник Чигрин куçса çӳрекен группа тунă, ăна лейтенант Алехин ертсе пынă. Нимĕçсен флангĕсем çине минометсемпе пулеметсенчен персе тăрса, çав группа боецĕсем тăшман çавăрса илме хăтланнине арканса янă. 132-мĕш пехотнăй дивизин пирвайхи батальонĕсен атакисене пурне те сирсе янă. Нимĕçсен командованийĕ çĕнĕ полка çапăçăва кĕртнĕ. Артиллери, зенитнăй пулеметсем тата майор Левченко часĕ, шыв урлă каçмалли вырăна хӳтлесе тăраканскерсем, çак полка та пысăк çухатусем кӳнĕ. Темиçе кун хушши çапăçнă хыçăн, 132-мĕш пехотнăй дивизин фашисчĕсен Р. патĕнчи çапăçусенче 6 пин ытла салтак вилнĕ.

* * *

Капитан Дубравинăн батальонĕнчи снайпер-зенитчиксем фашистсен самолечĕсене тĕл персе ӳкереççĕ. Батальонри чи лайăх снайпер ефрейтор Абрикосов хăйĕн зенитнăй пулеметĕнчен персе нимĕçсен темиçе самолетне ӳкернĕ. Нумаях пулмасть батальон çине тăшманăн виçĕ самолечĕ тапăннă. Батальон вырнаçнă тĕле «Юнкерссем» пĕрин хыçăн тепри вĕçе-вĕçе аннă. Вĕсенчен иккĕшĕ тарса ĕлкĕрнĕ, виçĕмĕшне Абрикосов юлташ зенитнăй пулеметран персе пĕтерсе тăкнă. Ку вăл ефрейтор персе ӳкернĕ иккĕмĕш бомбардировщик пулнă. Пĕрремĕшне вăл самолет вĕçсе аннă чухне персе ӳкернĕ, иккĕмĕшне вăл вĕçсе хăпарнă чухне персе антарнă.

«Чи кирли вăл,—тет Абрикосов юлташ,—сухалса каймалла мар. Вĕçсе аннă чухне тăшман самолетне пуçĕнчен пер, вăл вĕçсе хăпарнă чухне хӳри çине пер».

* * *

Фашистла оккупантсене хирĕç молдаван партизанĕсен отрячĕсем паттăрăн кĕрешеççĕ. Германипе Румыни войскисем Котовск, Балта, Гребеника тата Карманово районĕсенче уйрăмах пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Юлашки эрне хушшинче çак вырăнсенче партизансем нимĕç тата румын салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем боеприпассен 8 складне, горючисен 4 базине тата продовольствисен 7 складне вут тĕртсе, взрыв туса арканă. Фашистсенчен 4 бронемашина, 5 грузовик тата 2 çăмăл машина туртса илнĕ. Кунсăр пуçне, партизансем 17 пулемет, 5 çăмăл оруди тата винтовкăсем 500 ытла тытса илнĕ.

Çак кунсенче румын войскисен командованийĕ партизансен Думово, Ивановка тата Кондратское таврашĕсенче çапăçакан отрячĕсене пĕтерме икĕ пехотнăй рота янă. Çакăн çинчен пĕлсен, партизансем шоссе çулĕ тăрăх темиçе засада тунă. Фашистсем çине персе тăнă хыççăн юлануртлă партизансем хăвăрттăн пытаннă. Урăх вырăнта пухăнса, вĕсем татах засада тунă. Фашистла войскăсем Думово патне пырса çитиччен, вĕсене ултă хутчен тапăна-тапăна пенĕ, вĕсем 70 салтак ытла çухатнă. Обществăллă питани профсоюзĕн работникĕ П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Думовопа Ивановка местечкисем хушшинче пысăк засада тунă. Румын салтакĕсенчен 30 яхăн çынна пĕтерсе тăкнă хыççăн, отряд пытаннă. Румынсем отряда хăвалама пехотăн икĕ взводне янă. Партизансем румын салтакĕсене чугунçул хĕрринче сыхласа кĕтсе илнĕ те, вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Румынсен карательнăй экспедицийĕ, хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсенчен пĕтĕмпе 200 çынна яхăн çухатса, каялла çавăрăннă. Каялла таврăннă чухне фашистла карательсем çине юланутлă партизансен отрячĕсем хутчен пыраспыра тапăннă. «Экспедици» Котовска каялла таврăнсан, ун йышĕнчен çурри кăна юлни тата 10 пулемет пĕтни палăлă пулнă.

* * *

Германин 445-мĕш пехотнăй полкĕнчи ефрейтор Макс Горн, Хĕвеланăç фронтĕнче вилнĕскерĕн, çумĕнче тупнă документсем хушшинче, ефрейтор хăйĕн Клара ятлă арăмĕ патне яма хатĕрленнĕ çырса пĕтереймен çырăва тупнă. Аяларах çав çыруран илнĕ сыпăксене пичетлетпĕр, унта ефрейтор совет Белоруссин районĕсене оккупациленĕ нимĕçсен фашистла войскисемшĕн совет партизанĕсем мĕнле йывăрлăхсем кӳни çинчен каласа парать. «Минска çитиччен пирĕн автоколоннă кĕперсем ванчăк пирки ултă хутчен чарăнса тăчĕ тата тăватă хутчен пирĕн çине пулеметсемпе винтовкăсенчен печĕç. Слонимпа Барановичи хушшинче уйрăмах нумайччен чарăнса тăмалла пулчĕ. Кунта пире пурне те пысăк кĕпере, эпир çитиччен пĕр икĕ сехет малтан партизансем арканса хăварнăскерне, ĸсанă çĕрте ĕçлеме хушрĕç. Эпир çакăнтан пĕр çирĕм километр та кайса ĕлкĕреймерĕмĕр, пирĕн çине çавтери вăйлăн пеме пуçларĕç, питех те хăрушă пулса кайрĕ. Çакă вăл эпир вăрмантан тухса вăркăнченех пычĕç. Çапах та пирĕн машина çинче тăватă çын вилчĕ тата виççĕшĕ аманчĕç. Мăнтарăн Пауль пĕтрĕ. Пуля ăна сулахай аялкинчен лекрĕ. Тем, эсĕ кун çинчен унăн арăмне ан та кала. Антив, вăл пĕр вăхăтлăха та пулин шанса тăтăр. Минск хыççăн колонна пайланчĕ те тĕрлĕ еннелле сапаланса кайрĕ. Эпир малалла çуран кайрăмăр. Фронта çитиччен пирĕн çаплах çав куça курăнман çынсене—«невидимкăсене» хирĕç пĕр чарăнмасăр çапăçма лекрĕ. Берединоран инçе мар пĕр вырăнта вĕсене хирĕç пирĕн чăн-чăн çапăçăвах кĕме лекрĕ, çакăн хыççăн пирĕн ротăра 40 çын стройран тухрĕ».

* * *

Ленинград железнодорожникĕсем, Ленин хулинчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрле, нимĕçсен фашистла йытăтăвĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре хăйсен аслă героизмне кăтартса параççĕ. Хăюллă машинистсем, путеецсем, стрелочниксем, связистсем тăшман артиллерийĕн тата фашистла самолетсен вутçулăмĕ айĕнче хастаррăн ĕçлеççĕ. Машинист К. Никитин, вăрçă кунĕсенче кочегара ĕçлеме кĕнĕ арăмĕпе Ольăпа тата Н. Опечкин помощникпа пĕрле, фронт линийĕ патнелле питех те паха груз турттарса шынă. Тăшман летчикĕ состав çине персе, паровоз бригадинчи пур çынсене те амантнă. Паттăр железнодорожниксем аманнине пăхмасăрах, поезда кирлĕ çĕре çитернĕ. Машинист Васильевич, унăн помощникĕ Смирнов тата кочегар Сабуров паровоз çинче пĕр вĕçрен виçĕ талăк ĕçленĕ. Вĕсем çине темиçе хутчен сывлăшри пиратсем пыра-пыра тапăннă, анчах пĕлсе маневрсем туса, боеприпассене фронта сыхлавлăн çитернĕ.

Ворошилов, Жданов тата Попков юлташсем чĕнсе каланнине ответлесе чугунçулсем çинче ĕçлекенсен мĕнпур коллективĕсенче митингсем пулса иртнĕ. «Эпĕ 1905 тата 1917 çулсенчи революцисен участникĕ,—тенĕ проводник Егоров юлташ—Ленинграда 50 çул пурăнса иртternĕ, халĕ, тăван хула çине хăрушлăх килсе тухнă самантра, мана халăх ополченин боецĕ тесе шутлама ыйтатăп. Эпĕ, ытти мĕнпур ленинградецсем пекех, алла винтовка тытса ирĕр тăшмана хирĕç кĕрешме тухатăп». Пиншер железнодорожниксем, халăх ополчени отрячĕсене кĕрсе, алла хĕçпăшал тытса тискер тăшмана аркатаççĕ. Н-ски вагоннăй участокра мĕнпур арçынсем, 18 çултисенчен пуçласа 50 çултисене çитиччен, куллен-кун ĕç хыççăн çар ĕçне вĕренеççĕ. Н-ски мастерскойĕнче ĕçлекен железнодорожниксем хăйсен вăйĕсемпе бронепоезд тума пулчĕç.

Совет войскисем Иранра малалла куçса пыни

Совет войскисем августăн 27-мĕшĕнче Деххаргана, Туркманчая, Керганруда, Кучана йышăннă. Войскăсем малаллах куçса пыраççĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Кингисепп, Гомель, Днепропетровск тата Одесса енĕсенче противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Балтикăн красноармеецĕсемпе моряксем Ханко çурмаутравĕн территорине паттăрăн хӳтлесе тăраççĕ. Çĕрле белофинсен пысăк вăйĕсем капитан Сукачăн подразделенийĕ йышăннă позицисем çине наступлени тума пуçланă. Пирĕн боецсем лăпкăн кĕтсе илсе, белофинсене темиçе метра çити сывхарма май панă, вара винтовкăсемпе пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Çапăçура кĕçĕн сержант Шауканов, лейтенант Кузнецов, красноармеец Савельев тата Совет Союз Героийĕ красноармеец-снайпер Сокур, 13 белофина пĕтерсе тăкнăскер, уйрăмăнах палăрнă. Çапăçу пĕр сехет ытла пынă. Пирĕн боецсем персе тăнине чăтаймасăр, белофинсем чакма пуçланă. Анчах та фашистсен каялла каймалли çулне пирĕн артиллери вăйлăн персе пӳлсе тартнă. Çапăçура белофинсен отрядне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çĕр çинче тапăннипе пĕр вăхăтрах белофинсем тинĕсрен те çапма хăтланса пăхнă. Анчах çак операци те тăшманшăн ăнăçсăр пулнă. Белофинсен десант тиенĕ 8 плюшкине пурне те шыва путарнă.

* * *

Çак кунсенче фронтăн кăнтăр-хĕвеланăç енчи Н-ски участокра Германи летчикĕ Украинăри колхозниксем патне çырнă çырăва пăрахнă. «Хресчен юлташсем!—тесе çырать летчик.—Хăвăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшăр. Сирĕн сĕршыври тата Англири халăхсем Гитлера çапса аркатĕç. Эпир, Германи салтакĕсем, вăрçасшăн мар. Часах вăхăт çитĕ, вара эпир пĕрлешĕпĕр. Салам сире Германи летчикĕнчен». Çырăвăн тепĕр енне çакăн пек çырса хунă: «Начар çырнăшăн каçарăр, васкарăм. Салам».

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енче Н. районĕнче пирĕн танксен часĕ Германин 41-мĕш пехотнăй полкне тата унăн штабне çĕмĕрсе тăкнă. Штабра полковника, 41-мĕш пехотнăй полкăн командирне, тата темиçе офицера вĕлернĕ.

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енчи Н-ски участокра Германи авиацийĕ чугунçул çинчи питех те кирлĕ кĕпере çĕмĕрме ăнăçсăр хăтланса пăхнă. Германи летчикĕсен талăнăвĕсене пурне те Совет зенитчикĕсем питех те тĕл персе сиресире янă. Демченко тата Алейник юлташсен зенитнăй расчечĕсем уйрăмăнах лайăх çапăçнă. Пĕр кун хушшинче вĕсем Германи авиацийĕн темиçе тапăнăвне сире-сире ярса, противникăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Карелсемпе финсен партизанла отрячĕсем нимĕçсемпе белофинсен войскисене тăтăшах пыра-пыра çапаççĕ. Çак кунсенче лесоруб К. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ белофинсен çарĕн П. ялĕ витĕр иртсе каякан подразделенийĕ çине хăюллăн тапăннă. Белофинсен 40 яхăн салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерсе пĕтерсе, партизансем вĕсен мĕнпур хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ, П. ялĕ патĕнчи икĕ кĕпере çĕмĕрнĕ, телеграф провочĕсене татса илнĕ, вара тарса пытаннă. Тепĕр кунхине çак отрядах нимĕçсен У. ялĕ патне кĕпересем юсама каякан саперĕсем çине тапăннă. Партизансем 35 салтака яхăн пĕтерсе тăкнă тата саперсен пĕтĕм инвентарьне çĕмĕрсе пĕтернĕ.

* * *

Киномеханик Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕн разведчикĕсем Л. кӳлли урлă совет территорийĕ çине десант отрядне яма тăшман пысăк лодкăсем хатĕрлени çинчен пĕлнĕ. Çĕрле партизансен отрячĕн пĕр пайĕ çыранри ялта пулнă нимĕçсем çине тапăннă. Хире-хирĕç персе тăма тытăннă. Çак вăхăтра десанта илсе каймa хатĕрленĕ лодкăсем патне партизансен тепĕр группи пынă та вĕсене пĕтерсе тăкнă. Фашистсене 50 çынна ытла вĕлерсе пĕтерсе, партизансем вĕсен мĕнпур хĕçпăшалсене тытса илнĕ, П. ялĕ патĕнчи икĕ кĕпере çĕмĕрнĕ, телеграф провочĕсене татса илнĕ, вара тарса пытаннă. Тепĕр кунхине çак отрядах нимĕçсен У. ялĕ патне кĕпересем юсама каякан саперĕсем çине тапăннă. Партизансем 35 салтака яхăн пĕтерсе тăкнă тата саперсен пĕтĕм инвентарьне çĕмĕрсе пĕтернĕ.

* * *

Киномеханик Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕн разведчикĕсем Л. кӳлли урлă юлташ 3 ĕçкунĕ тата 5 тенкĕ укçа, П. Романова 2 аршăн пир, пĕр алшăлли, Е. Шамава юлташ 4 ĕçкунĕ оборона фондне панă. Пурĕ çĕршыв оборонин фондне 174 ĕçкунĕ, 36 çăмарта, 13 алшăлли пухса пачĕç.

А. П. УХВАРИН.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Янаткасси ялсоветне кĕрекен «Волна революции» колхоз членĕсем оборона фондне 1370 килограмм ыраш панă. Кунсăр пуçне колхозниксем вăрçă вăхăтĕнче кашни уйăхрах пĕрер ĕçкунне çĕршыв оборонин фондне пама пулчĕç. Ялсоветĕнче сывлăшран килсе тапăнасран сыхланас тĕлĕшпе ПВХО кружокĕсем организацилеççĕ. Кружоксенче пурĕ 266 çын вĕренет. Вĕсем пурте вăрçă ĕçне производствăран уйăрăлмасăрах вĕренсе пыраççĕ. Ку ялсоветне кĕрекен колхозсенче политикăллă агитаци ĕçне производствăна сыхăнтарса туса пыраççĕ. «Волна революции», «Восход» тата «Смычка» колхозсенче кĕрхи тырăсене пĕр тăкаксăр пухса кĕчĕç. Халĕ вĕсем авăн çапаççĕ, тырă акаççĕ.

Н. МИХЕЕВ.

Çĕршыв оборонин фончĕ

КАНАШ. «Мотор» колхоз оборона фондне 5 тонна тырă пачĕ. Кунсăр пуçне колхозниксем кашни уйăхрах пĕрер ĕçкунĕн тупăшĕсене çĕршыв оборонин фондне пама пулнă.

Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз çĕршыв оборонин фондне 8 центнер тĕштырă, 115 çăмарта, 1600 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. Райçĕрĕç пайĕн старший агрономĕ Тимофеев юлташ апробаци тунăшăн тивекен 300 тенкĕ укçана оборона фондне панă.

А. ВОРОБЬЕВ.

* * *

ВĂРМАР. Арапуçĕнчи туллимар вăтам шкулта çĕлекен учительсем СССР оборонин фондне кашни уйăхрах пĕрер кунхи ĕçукçине пама пулчĕç. Заем облигацийĕсене 3700 тенкĕлĕх пачĕç. Çĕнĕ заем укçине январĕн 1-мĕшне парса татма пулчĕç.

Г. ИВАНОВ.

* * *

ШАМАРША. Çĕнĕ Шăмăршăри «Новая деревня» колхоз колхозникĕ Ф. Сидоров юлташ çĕршыв оборонин фондне 6 ĕçкунĕн тупăшне пачĕ. А. Давыдова

Англи войскисем Иранра малалла куçса пыни

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Симлăран Иранри вăрçă ĕçĕсем çинчен кăларнă коммюникене парать.

Коммюникере çапла каланă: Англипе Инди войскисем Иранăн Кăнтăр-Хĕвеланăç тата Хĕвеланăç енче малалла куçасси йĕркеллĕ пулса пырать. Инди войскисенчен тасатнă. Çавăн чухне ике тупă, виçĕ бронемашина тургса илнĕ, 350 çынна тыткăна илнĕ. Англи чаçĕсем Марида та йышăннă (Марид—Абаданран çурçĕр енче 60 километрта). Бендер-Шахпурта лăпкă.

Англипе Инди войскисем Ханекин секторĕнче Гилана йышăннă, противник вĕсене хирĕç вăйлăн çапăни пулман. Çав вăхăтра тепĕр колонна Сарипул лешъенне, укрепленийлĕ Пайтах прохочĕ патнелле куçнă. (Пайтак—Ханекинпа Керманшах хушшинчи çул çинче вырнаçса тăрать).

Англин сывлăш вăйĕсем çĕр çинчи войскăсен ĕçĕсене пулăшу парса пынă тата Иранăн тĕрлĕ хулисем çине листовкăсем пăрахнă. Иран авиацине хирĕç пынă операцисенче сахалтан та Иранăн ултă самолетне пĕтерсе тăкнă тата темиçе самолетне сиенленĕ. Англи самолечĕсем пурте хăйсен базисене тавăрăннă.

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Симлăран панă пĕлтерӳ тăрăх, Иранăн тинĕс-çар флочĕ англичансем тытса илнĕ ишсе çӳрекен базăпа икĕ буксирлă карапсăр пуçне, икĕ сторожевой караппа тăватă канонерка çухатнă.

Англин тинĕс-çар флочĕн çухатусем пулман.

Германипе Италин Бендер-Шахпурта малтан интернировать тунă 8 пароходĕнчен 7 пароходне тытса илнĕ, сакăрмĕшне путарнă. Тытса илнĕ пароходсенчен иккĕшĕ сиенленмен пулнă. Нимĕçсемпе итальянецсем сакăр парохода пурне те çĕмĕрсе тăкма тĕплĕн план тунă, хăшĕсене сиен тума та ĕлкĕрнĕ. Анчах та англичансем хăвăрт пырса çитни пароходсене малалла çĕмĕрессине чарса лартнă.

Агентство малалла çапла пĕлтерет: Симлăра паллă пулса тăнă тăрăх, Бендер-Шахпурта тыткăна илнисем хушшинче нимĕçсемпе итальянецсем нумай.

Совет Союзĕпе Англи войскисем Ирана пырса кĕни çинчен ютçĕршывсенчи пичет мĕн çырать

США

НЬЮ-ЙОРК, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Нью-Йоркри пур хаçатсем те Совет Союзĕпе Англи войскисем Ирана кĕни çинчен калакан пĕлтерӳсене пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Нумайĕш хаçатсем Совет Правительстви патнă нотăн текстне тата Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин заявленине пичетленĕ.

Пĕтĕм пичет Иранра нацистла переворотăн хăрушлăхĕ пулнине палăртать. Иранра, тесе çырать «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат, «гитлеризма хирĕç Англипе Российăн пĕрлĕхлĕ фрончĕ пулса пырать». Хаçатсем Англипе Совет Союзĕ Иран тĕлĕшпе туса пыракан ĕçсене пурте пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ, ку ĕçсем Иран территорине тытса илес тĕлĕшпе пулса пымаççĕ, тесе паллă тăваççĕ.

ИНДИЯ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Совет Союзĕн Иранри ĕçĕсене Инди прессипе общественность пурте пĕр шухăшлă пулса ырласа йышăннă.

«Мадрас мейл» хаçат çапла çырать: Союзниксен Иранри ĕçĕсем Совет Союзĕпе Инди интересĕсене кăна мар, çавăн пекех тата Çывăх-Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен, çав шутрах Палестинăн, Египетăн тата Афганистанăн интересĕсене те хăтлеççĕ.

ЕГИПЕТ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Совет Союзĕ вăхăтра пуçарулăх кăтартса, Гитлерăн ултавлă та сĕмсĕр планĕсене Çывăх-Хĕвелтухăçĕнче пурнăçа кĕртессине сирсе янишĕн Египетра тулли кăмăлпа савăннине палăртаççĕ.

ИТАЛИЯ

ЖЕНЕВА, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Италире влаçра тăракан çынсем, фашистла «тĕнĕлĕн» Иранри империалиста темиçе самолетне снарядла пĕлтерсе пăрахнă. Англи самолечĕсем Иранăн çĕршывне ăшă пăхăнмасăр пурăнас ĕçĕнче Иран Совет Союзĕпе çыхăнусем тытни чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак çыхăнусем тĕрлĕ вăхăтсенче тунă договорсем тăрăх йĕркеленсе пыраççĕ.

Нимĕç захватчикĕсене нефть пуррипе тата стратеги енчен лайăх вырăн йышăнса тăлипе илĕртекен Иран çĕршывне Германи империализмĕ тахçанах хăй аллине тытса илме тăрăшать. Иран — пĕр енчен, Индие каçакан «сухопутнăй кĕпер», тепĕр енчен — вăл Совет Союзĕн промышленность центрĕсем сыхăнче, уйрăмах Бакупа Грознăйри нефть промыслисем çывăхĕнче сарăлса вырлать. Нимĕçсен Иранри колонийĕ темиçе пин çынран тăрать. Пĕр Тегеран хулинче кăна 1 пине яхăн нимĕç пурăнать.

Нимĕçсем Иран правительствин аппаратĕнчи официаллă пысăк вырăнсене хĕсĕнсе кĕнĕ. Нимĕçсем çар ведомствин учрежденийĕсемпе предприятийĕсене — пулеметсем тăвакан, тар тăвакан, капсуль тăвакан заводсене, противогазсем тăвакан фабрикăна, çар арсеналне, аэродромсене уйрăмах нумай хĕсĕнсе кĕнĕ. Нимĕçсем Иран çарĕнче инструкторсем пулса сахал мар пурăнаççĕ. Нимĕçсене Иран чугунçулĕсен центральнăй управленийĕнче ответлă вырăнсем чылай панă пулнă.

Иранра нимĕç шпионĕсем туллиех. Иран çĕршывĕн çурçĕр енче нимĕç Вольф, «Иранэкспресс» ятлă транспорт конторин Пехлеви хулинчи «представителĕ», Каспи тинĕсĕ хĕрринче шпионсен нумай çĕрте ĕçлекен пысăк ушкăнне туса хунă, кăнтăрта çав ĕçех тахçанхи шпион провокатор Шунеман туса пырать, вăл, формально пăхсан, Юнкерс фирмин представителĕ шутланса тăрать, анчах чăннипе вăл Гиммлер «фирмин» представителĕ. Тата ытти пысăк шпионсен чылай ячĕсене Совет Правительстви Иран правительствине кăçалхи августăн 25-мĕшĕнче панă нотăра кăтартнă.

Гитлеровецсем вырăнти çынсем хушшинче те хăйсен ĕçне анлăн туса пынă, вĕсем фашистла май шухăшлакан офицерсем, хушшинче, хирĕçекен йăхсен пуçлăхĕсем хушшинче хăйсен агентурине пухнă. Вĕсем Иранăн нумай хулисенче вăрттăн ĕçлекен фашистла группăсем туса хунă, Тегеранра, Хамаданра тата ытти вырăнсенче куçса çӳрекен вăрттăн радиопередатчиксем лартнă.

Гитлеровецсем Иранра пурăнакан вырăс белогвардеецĕсем, муссаватистсем, дашнаксем тата ытти çавăн йышши элементсем хушшинче вăйлă агитаци туса пынă. Тĕслĕхрен, дашнаксене, вĕсем ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнассăн, Совет Арменийĕнчен тата Иранпа Турцири армин районĕсенчен «Аслă Армени» туса хума сăмах панă.

Германи агенчĕсен Иранри ултавлă та ирсĕр ĕçĕ Иранăн хăйнех те, çавăн пекех Иранпа ССР Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусемпех те питĕ пысăк хăрушлăх туса хучĕ.

Çавна пула Совет Правительстви хутĕлĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла пулчĕ, Совет Союзĕпе Иран хушшинче 1921 çулта тунă договорăн 6-мĕш статьи тăрăх Совет Союзне панă правăна—хăйне хӳтлес тĕлĕшпе вăхăтлăха Иран территорине хăйĕн войскисене илсе кĕрес правăна çийĕнчех пурнăçа кĕртмелле пулчĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи самолечĕсем Фризски утравсемпе Голланди çыранĕ таврашĕнче Германи суднисен караванĕсем çине пырса тапăннă. Зенитнăй орудисенчен хытă персе тăнă лулсан та, Германин икĕ пароходне путарнă тата ытти чылай пароходсене сиенленĕ е вут тĕртсе янă.

Тепĕр соединени Сент-Омер таврашĕнчи аэродром çине бомбăсем пăрахнă, унти постройкăсем çине темиçе бомба тĕл пырса ӳкнине палăртнă. Шербург районĕнчи аэродром çинчи самолетсене тупăсенчен тата пулеметсенчен пенĕ. Нумайĕш машинăсем çунма пуçланă.

Англи авиацийĕ августăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кельнри промышленноçлă районсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Çавăн пекех Гаврпа Булонь докĕсем тата противникăн Çурçĕр Францири аэродромĕсем çине вĕçсе пырса ăнăçлăн тапăннă.

Паян ирхине Англи истребителĕсем Франци çинче пулса иртнĕ операцисенче противникăн 10 самолетне пĕтерсе тăкнă; Англи авиацийĕн 8 истребитель пĕтнĕ.

Неприятель самолечĕсем августăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пысăк активлăх кăтартман. Германин шĕвченшер бомбардировщикĕсем пăрахнă бомбăсем пысăк сиен кӳмен. Бомбăсем пăрахнă пĕр пунктра жертвăсем пур.

Англин йывăр бомбардировщикĕсем августăн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче Триполи çине тапăннă, унта нумай пушарсем тухнă. Кăнтăр Африка авиацийĕн самолечĕсем августăн 25-мĕшĕнче неприятелĕн Барди çывăхĕнчи склачĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Англи самолечĕсем «Арк Ройял» авианосец çинчен вĕçе-вĕçе кайса Сардинин çурçĕр çыранĕ çине тапăнни мĕнле пулса пыни çинчен те тĕплĕн пĕлтереççĕ. Темпио Паузакиа çывăхĕнчи вăрман тата хула таврашĕнчи пробка фабрики çине вут чĕртекен тата фугаслă бомбăсем темиçе çĕр бомба пăрахнă. 40 квадратлă километра яхăн шутланакан площадь çинче питĕ пысăк пушарсем тухнă. Ку район çине тапăнассине итальянецсем кĕтмен пулас, мĕншĕн тесен зенитнăй артиллери пемен тата пĕр истребитель те сывлăша вĕçсе çĕкленмен.

Англи зенитчикĕсен ĕçĕсем

Англин официальнăй даннăйĕсем тăрăх, вăрçа пуçланнăранпа мĕнпур фронтсенче зенитнăй артиллерирен персе 1.350 самолета пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллерин тĕллевĕ — самолетсене персе ӳкернинче кăна мар, тата самолетсем тапăнма килсен вĕсене çӳлте тытасси, стройĕсене салатса ярасси, çапла тунăпе вара вĕсене хирĕç çапăçма истребительсемшĕн май туса парасси пулать. Зенитнăй артиллери çак задачăна та ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă. (ТАСС).

Бомбăсем пырса пăрахакан районсенчен нимĕçсене урăх çĕре куçараççĕ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Енемне тивĕçлĕ вырăнсенчен çапла пĕлтереççĕ: бомбăсем пырса пăрахакан районсенчен Германи власĕсем нимĕçсене урăх вырăна куçарма пуçланă. Германин çурçĕр, çурçĕр-хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕсенчен нумай нимĕçсем Норвегине, Данине, Люксембурга тата Германин кăнтăрти пайне тухса кайнă. Кăнтăр Германире пурăнмалли çуртсем ситмеççĕ. Çĕршывăн ытти пайĕсенчен килекенсене хула тулашĕнче вăхăтлăха тунă постройкăсенче вырнаçтараççĕ. Линц таврашĕнче палаткăсенчен пĕр хула пулса тăнă.

Хĕрсем тырă выраççĕ

Хĕрсем тырă выраççĕ
Аслă Атăл хĕрринче,
Кĕлтесем тулли выртаççĕ
Пĕтĕм халăх умĕнче.

Пăшалсем пек яллăраççĕ
Çивĕч шăллă çурласем,
Ай танксем пек хăпараççĕ
Пысăк йĕкĕр капансем.

Пилĕк çуллĕш ӳснĕ тырă
Вăштăр-вăштăр силлеççĕ,
Ĕнесен сĕчĕ пит ырă,
Çăм параççĕ сурăхсем.

Тарласа ĕçлет бригада,
Вылятать çурлисене:
Тутлă çăкăр та кăçатă
Парăпăр паттăрсене.

Тăрăшса хĕрсем ĕçленĕ.
Тутăмлă сĕлле çисен
Тăшмана сирсе кĕçенĕç
Хĕрлĕ Çăран лашисем.

УХСАЙ ЯККАВĔ.

Агитбригада

СЕНТĔР. Парти райкомĕ организацилесе кăларса янă агитбригада колхозсенче нумай ĕçсем турĕ. Вăл колхозниксем тырă вырнă çĕрте пулса, чылай докладсемпе калаçусем ирттерчĕ, хаçат-журналсем вуласа панă.

Агитбригада пулнă Ахмане, Хачăк, Калайкасси, Шатракас, Шашкар, Апчар ялсовечĕсенчи колхозсем çĕршыв оборонин фондне тунă çĕре активлăн хутшăнма пуçларĕç. Сăмахран, «Ленинский путь» колхоз оборона фондне пĕр ĕне, 80 килограмм çăм панă, колхозниксем кашниех 5-шер ĕçкунĕ пама пулчĕç. Колхоз председателĕ Смирнов юлташ 350 тенкĕлĕх заем облигацийĕ тата 10 ĕçкунĕ панă. Колхозниксен хуçалăхĕсем килĕренех 10-шар çăмарта панăç тата кăçалхи сĕнĕ заем уксине йăлтах тӳлесе татрĕç.

«Красный Октябрь» колхоз оборона фондне пĕр тонна тырă, пĕр лаша, колхозниксем 3-шер ĕçкунĕ тата 5-шер çăмарта панăç. Шашкар ялсоветĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз 7 центнер ыраш, колхозниксем 5-шер ĕçкунĕ, 10-шар çăмарта тата чĕпĕсем пама пулчĕç. Колхозник И. Шигалов 145 тенкĕлĕх заем облигацийĕ тата 15 тенкĕ укçа панă. Апчар ялсоветĕнчи «Сеялка» колхоз оборона фондне пĕр тонна ыраш, колхозниксем 5-шер ĕçкунĕ, 5-шер çăмарта панăç. «Гигант» колхоз членĕсем 4-шер ĕçкунĕ, 10-шар çăмарта пама пулчĕç. Колхоз председателĕ Бабушкин юлташ 35 ĕçкунĕ панă.

Агитбригада 27 калаçу тата 17 доклад ирттернĕ.

И. АРГАНДЕЕВ.

Кĕрхи çĕртме тума тухрĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 27-мĕш. (Телефон тăрăх). Колхозсем çурхи тырăсене вырма тухрĕç. Çак куна пурĕ 374 гектар вырнă. Вырса пуçтарнă тырпула капана хывaççĕ. Тырă вырма тухнă кунранпах «Сĕнĕ вăй», «Прогресс», «Победа», «Волга», «Шимар» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем малта пыраççĕ. Çак колхозсем кĕрхи тырăсене те акса пĕтерчĕç. Колхозсем молотилкăсемпе туллин усă курса ĕçлеççĕ. 7 колхоз кĕрхи çĕртме тума тухрĕç.

Чылай колхозсем выльăх апатĕ сителĕклĕ тăвассишĕн кĕрешеççĕ. «Красное Сормово» колхоз—81 тонна, «Малалла»—70 тонна, «XII лет Октября»—60 тонна, «Красный Восток»—50 тонна силос хыпнă.

Н. АЛЕКСЕЕВ.
Райçĕрĕç пайăн главнăй агрономĕ.

СОВЕТ ВОЙСКИСЕМ ИРАНРА

ТБИЛИСИ, августăн 27-мĕш. («Красная Звезда» спецкорĕнчен телефон тăрăх). Аракс шавлать. Совет пехоти чикĕри шавласа юхакан юханшыв урлă ишсе каçать. Джульфинск, Астаринск тата ытти кĕперсем урлă мотоциклсем вирхĕнсе каçса кайрĕç, танксем тапранса тухрĕç, кавалери сиккипе иртсе кайрĕ. Пĕлĕтре самолетсен кĕрлевĕ илтĕнчĕ. Хĕрлĕ Çар Ирана кĕрсе кайрĕ. Августăн 25-мĕшĕнче ирхине пирĕн чаçсем Ардебиль тата Тавриз еннелле 40 километр шалалла куçрĕç.

Халăхпа пĕрремĕш хут тĕлпулнисен сакна ĕнентерсе парать: Совет Союзĕпе Великобритани пĕрле туса иртерекен сак ĕçе—Иранăн никама пăхăнмалла мар положенине çирĕплетекен ĕçе Иран халăхĕ тĕрĕс ăнланса хаклать.

— Нимĕçсем çĕршывра шикленĕç туса хучĕç,—тесе калать Гергер ялĕнчи кăвак сухаллă хресчен Новруз Руга — Эпир Хĕрлĕ Çар килнишĕн хĕпĕртетпĕр.

Хресчен боецсен сăвăнăçлă сăн-пичĕсем çине пăхса илет те, кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн, хĕвелтухăçĕнчи чăнчăн чаплăлăхпа çапла калать:

— Арахăн тепĕр енче çирĕн туссем пурăннине эпир пĕлсе тăнă. Халĕ ĕнтĕ эпир кунта мирлĕ пурнăç илсе килтĕр. Пирĕн çĕр çинче çирĕн кашни утăма хĕвел çутатса тăтăр.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла каяççĕ. Уйхирсенче йĕри-таврах çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне лăпкăн тăваççĕ, войскăсен малалла куçса пыракан колоннисене туслă юратупа, савăнăçлă чит-куçпа шавласа ăсатса яраççĕ.

Совет Российипе Иран хушшинче 1921 çулта тунă договор тăрăх пирĕн войскăсем Ирана пырса кĕчĕç; Новатулла Гуссейн Оглы хресченпе эпир çав договор çинчен калаçрăмăр, хресчен çапла каларĕ:

— Пирĕн авалхи мудрецсем çапла вĕрентнĕ: «сăмах—таса, анчах та договор сăмахĕ виçĕ хут таса». Эпир пирĕн тата договор условийĕсем тăрăх килтĕр, эпир сире саламлатпăр... Совет войскисем кунта вăхăтлăха кăна килчĕç, нимĕçсем тунă хăрушлăха—Совет государствине те тата Ирана та хăрат. са тăракан хăрушлăха сирсе ярсанах, вăл войскăсене çĕршывран илсе каяççĕ,—çакна Иран халăхĕ пĕлсе тăрать.

Кянборо ялĕ. Тăмран тунă çуртсемлĕ хĕвĕр урамсенче ачасем выляса çӳреççĕ. Пирĕн боец-пехотинецсене курсанах, вĕсем чупса пырса юнашар утаççĕ, боецсемпе пĕр харăс маршпа утма тăрăшаççĕ. Ялти çитĕннĕ çынсем красноармеецсене чĕнсе тăратаççĕ те, алисемпе хăлаçланкаласа вĕсене алă тытасшăн пулнине ăнлантарса параççĕ. Пĕр-пĕрне саламланă хыççăн, вĕсем пурте аяккалла пăрăнаççĕ, красноармеецсене саламлама хăйсен ялĕнчи ытти çынсене май параççĕ. Апеличай мес течки патĕнче уя ĕçлеме каякан хресченсен пысăк группи, хăйĕн çулне уляштарса, чылай вăхăт хушши войскăсен хыççăн пычĕ, çав хресченсем войскăсен формине тата вооруженине ăшшăн юратса пăхрĕç. Инçетре Тавриз курăнма пуçларĕ. Ку вăл хăйĕн пысăкăшпе Иранра иккĕмĕш хула. Унта чи малтан Синенко юлташăн танковăй чăçĕ пырса кĕчĕ. Хула çыннисем гитлеровецсем çĕршывра хăйсене хуçасем пек тыткалани çинчен, вырăнти халăх çине картмасăр тата сиввĕн пăхни çинчен тарăхса каласа параççĕ. Нимĕçсем Иранра хăйсене хăйсем çĕнтерсе илнĕ государствăри пекех тыткаланă. Вĕсен агенчĕсем пур çĕрте те янккаса çӳренĕ, провокацийлĕ сăмахсем сарнă тата провокацийлĕ ĕçсем тунă.

Иран çарĕн старший лейтенанчĕ, Тавризра çуралса ӳснĕ Мартуз Керуби Багир Оглы çакăн çинчен тарăхса каласа парать:

— Икĕ фашист пирĕн чикĕне манăн куç умĕнчех ӳçăнах фотографипе ӳкерсе илчĕç. Эпĕ вĕсене чарма хăтлантăм, анчах нимĕн те тухмарĕ. Эпĕ высший начальствăран выговор çеç илтĕм.

Пирĕн самолетсем çĕршыври хулисемпе ялсем çине—Мехабад, Марага, Зенджан, Фумен, Решит тата ытти çине те Иран чĕлхипе пичетленĕ çĕршер пин листовкăсем пăрахрĕç, çав листовкăсем гитлерла бандитсем Иранра туса пынă ишĕлтерӳллĕ ĕçсене тăрăшыв çине кăлараççĕ тата Хĕрлĕ Çар мĕнле сăлтавпа Ирана пырса кĕни çинчен халăха ăнлантарса параççĕ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем малалла питех те хăвăрт куçса пыраççĕ. Боецсем, командирсем, политработниксем командованин заданине тĕрĕс пурнăçа кĕртеççĕ. Совет войскисем тăвакан операцисем мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине чаçсен пĕтĕм личнăй составĕ ăнланать. Тĕрĕс тата организованно ĕçленĕшĕн Военнăй Совет горно-стрелковăй чаçĕн командирне Турчинский полковника, полковăй комиссара Буинцева, танковăй чаçĕн командирне Лебеденкова тата старший политрука Леонова тав турĕ.

Иран халăхĕ хайне Гитлер чури туса хурас хăрушлăхран çăлакан Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсене ырлать.

Республикăри уйхирсенче

КАНАШ, августăн 27-мĕш. (Телефон тăрăх). Районри пур колхозсем те çуртри выраççĕ. «Чуваш. ЦИК» колхозра жнейкăсемпе 16-шар сехет ĕçлесе кашни кунах 6—7 гектар выраççĕ. Доронин, Куйбышев, Киров ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçсем хĕрӳллĕ пыраççĕ.

Машинно-тракторнăй станцин комбайнерĕсем чылайăшĕ пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. 7-мĕш бригадири комбайнер Тарас Селиванов çак вăхăта çитсе 100 гектар ытла вырнă. Юлашки кунсенче вăл 15-шер гектар вырать. 9-мĕш бригадири комбайнер Петр Иванов пурĕ 100 гектар вырнă. Августăн 25-мĕшĕнче вăл 13 гектар вырнă. Çавăн пекех комбайнерка Ольга Дмитриева та нормăна тултарса пырать.

Т. МАЙОРОВ.

СОВЕТСКОЕ. Августăн 22-мĕшне Чемейри «Сеятель», Уйкас-Асламаски «Искра», Кивуйри «1-ое Мая», Тушкасси-нчи Володарский ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Асăннă колхозсем кĕртыррисене пĕтĕмпех сортлă та таса вăрлăхсемпе акса хăварнă.

ЯК. СИГАЙ.

* * *

ÇĔРПУ, августăн 28-мĕш. (Телефон тăрăх). Районри колхозсем паянхи куна 11.390 гектар çине кĕрхи тырăсем акса хăварчĕç. Кăçал кĕрхи тырăсене иртнĕ çулхинчен чылай ытларах акаççĕ. Пăрса йышши культурăсене пуçтарнă вырăна 2052 гектар ыраш акса хăвараççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Комсомолецсемпе пионерсем тимĕр-тăмăр пухаççĕ

— Кирилл мучи, сирĕн выртса çӳрекен тимĕр-тăмăр çук-и?

— Мĕн тума?

Пионерсем хăйсем пухнă тимĕр-тăмăр ăçта кайни тата мĕн тума кирли çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

— Хĕрлĕ Çара пулăшма!

— Апла пулсан тупса парас. Манăн 4 ывăл фронтра, вĕсене пулăшасах пулать. Хĕрлĕ Çара пулăшма тесен нимĕн те хĕрхенсе тăмастăп,—тесе Кирилл мучи пионерсене 2 пăта яхăн тĕрлĕ тимĕр-тăмăр тупса парса ячĕ.

Тепĕр кунне Чупайри (Етĕрне р.) сельпо район центрне 56 центнер тимĕр-тăмăр леçсе пачĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Комсомолецсем августăн 21-мĕш тĕлне районĕпе 618 центнер ытла тимĕр-тăмăр пухнă. Тимĕр-тăмăр пухнине кашни ялтах курма пулать. Ку ĕçре пионерсемпе шкул ачисем те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Советскинчи вăтам шкулта вĕренекенсем 5,85 центнер пухнă.

Лекци

Паян, августăн 29-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче **«1941 çулти отечественнăй вăрçăри партизанла вăрçă»** темăпа лекци пулать. Лектор — профессор **Лурье.**

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Пурте ирĕклĕхех кĕме пултараççĕ.

ПАРТКАБИНЕТ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Лаваль, Деа тата де Бринон çине тапăкнă

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви, Виширен илнĕ хыпар çине кăтартса, çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăçĕнчи фронта Франци «доброволецĕсене» ăсатнă майпа Версальре пулса иртнĕ церемони вăхăтĕнче Лаваль, Деа тата де Бринон çине тапăнса вĕсене вĕлерме тăнă. Лавальпе Деана госпитале ăсатнă. Тапăнакан çын хăйне Поль Колетт тесе пĕлтернĕ, ăна арестленĕ.

„ÇĔНТЕРӲ ПИРĔНТЕ ПУЛАТЬ!“

РЕСПУБЛИКĂРИ КИНОТЕАТРСЕН ЭКРАНĔСЕМ ÇИНЕ

2-мĕш №-лĕ БОЕВОЙ КИНОСБОРНИК

КĂЛАРНĂ

СБОРНИК ПРОГРАММИНЧЕ:

„ВСТРЕЧА“ — белорусс халăхĕ хăйне асап тӳстернĕшĕн çапăçура фашистла ирсĕрсене мĕнле тавăрни çинчен каласа паракан кинновелла.

„ОДИН ИЗ МНОГИХ“ — фашистла çăхансене тĕл персе тивретекен мухтавлă хĕрлĕ зенитчиксем çинчен калакан фильм.

„У СТАРОЙ НЯНИ“ — фашистсен хĕçпăшаллă диверсантне тытса чарнă шиксĕр совет патриоткин хăюллăхĕ çинчен калакан фильм.

„СТО ЗА ОДНОГО“ — фашистла ирсĕрсем Югослави халăхне тискеррĕн пусмăрласа мăшкăллани çинчен тата çавăн пек тискер ĕçсемшĕн партизанла движенипе ответлекен халăхăн тарăхăвĕ çинчен калакан фильм.

Кинематографи ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ кăларнă.

2-мĕш №-лĕ Боевой Киносборнике пăхăр!

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпа промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5496

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 406. Ф. б. 98 84 п. л.

ИРАН

(Справка)

Иран — Вăтаçĕр-Хĕвелтухăçĕнчи пысăк государство, вăл 1 миллион та 646 пин квадратлă километр çĕр йышăнса тăрать.

Иран Совет Союзĕпе, Турципе, Иракпа, Афганистанпа тата Британи Индийĕпе чикĕленсе тăрать.

Экономика тĕлĕшĕнчен Иран кая юлнă ялхуçалăхлă çĕршыв. Кунта пурăнакан çынсен мĕнпур хисепĕнчен 80 процентĕ ялхуçалăхĕнче ĕçлет. Хресченсен ытларахăшĕн хăйсен çĕрĕсем çук, вĕсем çĕре помещиксенчен йывăр условисемпе тара илеççĕ. Иранра промышленность вăйсăр.

Çак çĕршывăн тĕп пуянлăхĕ—нефть. Нефтĕн пĕтĕм тĕнчери запасĕнчен 10 процентран пуçласа 12 процента çити Иран çĕршывĕнче шутланса тăрать, çакă вăл Англи хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Нефтьсĕр пуçне Иранра ылттăн, пăхăр, тимĕр руди, çĕркăмрăкĕ, кĕмĕл, тăхлан, цинк, свинец, ртуть пур. Вĕсене кăларас ĕç юлашки çулсенче кăна пуçланнă-ха.

Иранра 15—16 миллион çын пурăнать, вĕсен шутĕнче 3 миллион çын—вырăнтан вырăна куçса çӳресе пурăнакансем. Иранра пурăнакан мĕнпур çынсен хисепĕнчен 50—55 процента яхăн иранецсем шутланаççĕ, кунсăр пуçне, тюрксем, арабсем, лурсем, курдсем пур.

Иран столицинче Тегеранра 531 пин çын пурăнать.

Иранăн тĕп чугунçул линийĕ—трансиран чугунçулĕ 1.394 километра тăсăлать. Халĕ тата Тегеран — Мешхед, Тегеран — Тавриз чугунçулĕсене тăваççĕ, çавăн пекех, Ирана Турцине, Иракпа тата Индипе сыхăнтаракан автомобиль çулĕсем те стратегиллĕ вырăн йышăнса тăраççĕ.

Иранăн экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмасăр пурăнас ĕçĕнче Иран Совет Союзĕпе çыхăну тытни чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак çыхăнусем тĕрлĕ вăхăтсенче тунă договорсем тăрăх йĕркеленсе пыраççĕ.

Нимĕç захватчикĕсене нефть пуррипе тата стратеги енчен лайăх вырăн йышăнса тăлипе илĕртекен Иран çĕршывне Германи империализмĕ тахçанах хăй аллине тытса илме тăрăшать. Иран — пĕр енчен, Индие каçакан «сухопутнăй кĕпер», тепĕр енчен — вăл Совет Союзĕн промышленность центрĕсем сыхăнче, уйрăмах Бакупа Грознăйри нефть промыслисем çывăхĕнче сарăлса вырлать. Нимĕçсен Иранри колонийĕ темиçе пин çынран тăрать. Пĕр Тегеран хулинче кăна 1 пине яхăн нимĕç пурăнать.

Нимĕçсем Иран правительствин аппаратĕнчи официаллă пысăк вырăнсене хĕсĕнсе кĕнĕ. Нимĕçсем çар ведомствин учрежденийĕсемпе предприятийĕсене — пулеметсем тăвакан, тар тăвакан, капсуль тăвакан заводсене, противогазсем тăвакан фабрикăна, çар арсеналне, аэродромсене уйрăмах нумай хĕсĕнсе кĕнĕ. Нимĕçсем Иран çарĕнче инструкторсем пулса сахал мар пурăнаççĕ. Нимĕçсене Иран чугунçулĕсен центральнăй управленийĕнче ответлă вырăнсем чылай панă пулнă.

Иранра нимĕç шпионĕсем туллиех. Иран çĕршывĕн çурçĕр енче нимĕç Вольф, «Иранэкспресс» ятлă транспорт конторин Пехлеви хулинчи «представителĕ», Каспи тинĕсĕ хĕрринче шпионсен нумай çĕрте ĕçлекен пысăк ушкăнне туса хунă, кăнтăрта çав ĕçех тахçанхи шпион провокатор Шунеман туса пырать, вăл, формально пăхсан, Юнкерс фирмин представителĕ шутланса тăрать, анчах чăннипе вăл Гиммлер «фирмин» представителĕ. Тата ытти пысăк шпионсен чылай ячĕсене Совет Правительстви Иран правительствине кăçалхи августăн 25-мĕшĕнче панă нотăра кăтартнă.

Гитлеровецсем вырăнти çынсем хушшинче те хăйсен ĕçне анлăн туса пынă, вĕсем фашистла май шухăшлакан офицерсем, хушшинче, хирĕçекен йăхсен пуçлăхĕсем хушшинче хăйсен агентурине пухнă. Вĕсем Иранăн нумай хулисенче вăрттăн ĕçлекен фашистла группăсем туса хунă, Тегеранра, Хамаданра тата ытти вырăнсенче куçса çӳрекен вăрттăн радиопередатчиксем лартнă.

Гитлеровецсем Иранра пурăнакан вырăс белогвардеецĕсем, муссаватистсем, дашнаксем тата ытти çавăн йышши элементсем хушшинче вăйлă агитаци туса пынă. Тĕслĕхрен, дашнаксене, вĕсем ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнассăн, Совет Арменийĕнчен тата Иранпа Турцири армин районĕсенчен «Аслă Армени» туса хума сăмах панă.

Германи агенчĕсен Иранри ултавлă та ирсĕр ĕçĕ Иранăн хăйнех те, çавăн пекех Иранпа ССР Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусемпех те питĕ пысăк хăрушлăх туса хучĕ.

Çавна пула Совет Правительстви хутĕлĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла пулчĕ, Совет Союзĕпе Иран хушшинче 1921 çулта тунă договорăн 6-мĕш статьи тăрăх Совет Союзне панă правăна—хăйне хӳтлес тĕлĕшпе вăхăтлăха Иран территорине хăйĕн войскисене илсе кĕрес правăна çийĕнчех пурнăçа кĕртмелле пулчĕ.